❑ ЭДУАРД ЛЕБЕДЕВ

❑ ИРИНА СЕМЕНОВА








# Н.И. АШМАРИН ПРОФЕССОРĂН ĂСЛĂЛĂХРИ ТĔП ĔÇĔСЕМ ТАТА ВĔСЕН ПĔЛТЕРĔШĔ

**Ннотаци:** Çак статья паллă ăсчах Н.И. Ашмарин çырнă ĕçсене халалансă. Вăл хăйĕн ĕçĕсенче чăваш филологийĕн тĕрлĕ пайĕсене тĕпчене. Вĕсен йышĕнче грамматика, литература тата фольклористика, чĕлхе историйĕ, евĕрлев сăмахĕсем тата лексикографи палăртса хăварма пулать. Авторсем тĕпчевçĕн чи паллă та пĕлтерĕшлĕ ĕçĕсене илнĕ те вĕсен тытăмне кĕскен ăнлантарса панă. Грамматика ĕçĕсенчен чи пĕлтерĕшлисем – «Материалы для исследования чувашского языка» тата икĕ томлă «Опыт исследования чувашского синтаксиса» кĕнекесем. Çак кĕнекесенче ăсчах чăваш чĕлхин фонетикин, морфологийĕн тата синтаксисĕн хăйне евĕр концепцине панă. Тепĕр монографине – «Болгары и чуваши» – чĕлхе историне халалансă. Кунта вăл хальхи чăваш чĕлхипе Атăлçи Пăлхар эпитафийĕсен чĕлхин çыхăнăвĕсем пирки çырнă. Ăсчах пурнăçланă ĕçсенчен чи пысăкки та йывăрри «Словарь чувашского словаря» пуçтарасси, йĕркелесе хатĕрлесси тата пичетлесси пулнă. Словаре тĕнчепе паллă тюркологсем пысăк хак панă.

**Тĕп сăмахсем:** чăваш чĕлхин грамматики, сасă тытăмĕ, чĕлхе историйĕ, Атăлçи Пăлхар эпиграфийĕсем, евĕрлев сăмахĕсем, синтаксис, чăваш сăмахĕсен кĕнеки.

**Profesör N. İ. Aşmarin'in Bilim Alanındaki Temel Çalışmaları ve Bunların Önemi**

**Özet**: Bu makale ünlü bilgin N. İ. Aşmarin'in kaleme aldığı çalışmalara odaklanmıştır. Aşmarin kendi çalışmalarında Çuvaş filolojisinin çeşitli alanlarında araştırmalarda bulunmuştur. Bunların arasında gramer, edebiyat ve folklor, dil tarihi, yansıma kelimeler ve leksikografi gibi konu alanları belirtilebilir. Bu makalenin yazarları araştırmacının en bilinen ve en önemli çalışmalarını ele almış ve bu çalışmaların yapısını kısaca açıklamışlardır. Gramer çalışmalarından en önemlileri «Материалы для исследования чувашского языка» ve «Опыт исследования чувашского синтаксиса» adlı kitaplarıdır. Bu kitaplarda, bilgin Çuvaşçanın fonetiğinin, mitolojisinin ve sentaksının kendine özgü düzenini ortaya koymuştur. Bir diğer monografisi «Болгары и чуваши» adlı kitabı ise dil tarihine yöneliktir. Burada yazar günümüz Çuvaşçası ile İdil Bulgar mezar taşlarının dili arasındaki bağlantılar hakkında yazmıştır. Bilginin, hayata geçirdiği çalışmalarından

en büyüğü olan «Словарь чувашского словаря», malzemenin toplanması, düzenlenip hazırlanması ve yayımlanması bakımından kendisini en fazla zorlayan eser olmuştur.

**Anahtar Kelimler**: Çuvaş Dilinin Grameri, Ses Sistemi, Dil Tarihi, İdil-Bulgar Mezar Taşları, Yansıma Sözler, Sentaks, Çĭvaş Sĭmahĭsen Kĭneki.

**Basic Studies of Professor N. İ. Aşmarin in Science and Their Importance**

**Abstract:** This article focuses on works written by famous scholar N. İ. Aşmarin. He conducted researches in several fields of Chuvash philology in his own works. Among those, subject areas such as grammar, literature and folklore, history of language, onomatopoeic words and lexicography can be stated. The writers of this article have discussed the most known and important works of the researcher and explained their structure briefly. The most significant of his grammar studies are the books titled "Материалы для исследования чувашского языка" and "Опыт исследования чувашского синтаксиса." In these books, the scholar provided the unique structure of phonetics, mythology and syntax of Chuvash language. Another monograph of his, the book titled as "Болгары и чуваши", focuses on the history of language. Here the author wrote about the connections between Chuvash language of today and the language of Volga Bulgarian tombstones. The most comprehensive study that the scholar conducted, "Словарь чувашского словаря", was the most challenging one for him in terms of the collection, organization, preparations and publication of the materials.

**Keywords:** The Grammar of Chuvash Language, Phonetic System, History of Language, Volga-Bulgarian Tombstones, Onomatopoeic Words, Syntax, Book of Chuvash words

Кăçал пирĕн республикăра тата пĕтĕм ăслăлăх тĕнчинче Раççей паллă тюркологĕн, Н.И. Ашмаринăн 150-мĕш çулхи юбилейне палăртаççĕ. Унăн ăслăлăх ĕçĕсем пирĕншĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен Н.И. Ашмарин чăваш филологийĕнче ĕçлесе ун аталанăвĕ валли нумай тунă. Вăл 1870 çулта Етĕрне хулинче çуралнă. Чулхула гимназийĕнче ăс пухнă хыççăн Мускава кайса Хĕвелтухăç чĕлхисен (Лазаревский) институтне кĕнĕ. Çак институтра пулас ăсчах араб, перс, турккă чĕлхисене вĕреннĕ. Н.И. Ашмаринăн чи паллă вĕрентекенĕ Ф.Е. Корш академик пулнă. Вăл хăйĕн вĕренекенне лингвистика ăслăлăхĕн никĕсĕсене вĕрентнĕ. Институт пĕтернĕ хыççăн Николай Иванович ĕçлеме Хусана кайнă. Унăн ĕмĕрĕн чи пысăк пайĕ вара çак хулара иртрĕ. Унсăр пуçне вăл темиçешер çул Чĕмпĕр тата Баку хулисенче, унти университетсенче ĕçленĕ. Анчах пурпĕрех Хусана таврăннă. 1933 çулта вилнĕ Хусанти Ар масарĕнче пытарнă.

Н.И. Ашмарин ĕçленĕ ăслăлăх пайĕсенчен çаксене палăртма пултаратпăр: грамматика, литература тата фольклористика, чĕлхе историйĕ, евĕрлев сăмахĕсем тата лексикографи. Пирĕн кĕске статьяра ăсчахăн хăш-пĕр ĕçĕсене тĕпчес терĕмĕр.

Н.И. Ашмаринăн чăваш чĕлхи грамматикине халалланă ĕçĕсенчен чи паллă та хакли – икĕ ĕç: «Материалы для исследования чувашского языка» тата икĕ томлă «Опыт исследования чувашского синтаксиса» (Ашмарин 1898; Ашмарин 1903: 1923). «Материалы» ĕçе вăл Мускаври Лазаревский институтăн юлашки курсĕнче вĕреннĕ чух çырма тытăннă. Вăл вăхăтра унăн пысăк ăслăлăх ĕçĕсене хатĕрлеме опычĕ пачах та пулман. Çавăнпа малтанлăха ал çырăвĕсене тĕрĕслеме

тата тӳрлетме хăйĕн вĕрентекенĕсене В.Ф. Миллерпа Ф.Е. Корша кăтартнă. Вĕсем çамрăк ăсчаха питĕ усăллă сĕнӳсене пачĕç. Хусана куçнă хыççăн 1898 çулта çак монографие пичетлесе кăларнă. Кĕнекене ăслăлăх енĕпе редакцилеме Николай Ивановича тепĕр пысăх ăсчах, Н.Ф. Катанов профессор пулăшнă. Вăл ал çырăвне тĕрлĕ тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан питĕ интереслĕ те пĕлтерĕшлĕ материал кĕртнĕ. Ёçĕн ум сăмахĕнче Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхин икĕ тĕп диалекчĕ (вирьял тата анатри) пирки çырать (Ашмарин 1898: I-II). Унăн шухăшĕпе чăваш чĕлхи – чăн тĕрĕк чĕлхи, анчах мĕн ĕлĕкрен финн-угр чĕлхисемпе çыхăнăва кĕрсе çак чĕлхесенчен хăш-пĕр уйрăмлăхсене йышăннă. Пĕр территори çинче нумай ĕмĕр хушшинче пĕрле пурăннăран чăвашсем хăйсен кӳршисенчен чылай сăмах илнĕ. Вĕсем хăйсем те чăваш чĕлхинчен сăмахсем йышăннă. Николай Иванович хăйĕн кĕнекинче темиçе список парать. Çак списоксенче тутар чĕлхинчен чăваш чĕлхине, чăваш чĕлхинчен çармăс тата удмурт чĕлхисене кĕнĕ сăмахсем кăтартнă. Хăй вăхăчĕшĕн çак списоксем чи пысăккисем пулнă (Ашмарин 1898: VIII–XVIII).

«Материалы» икĕ пайран тăрать – «Учение о звуках» (Сасăсем çинчен калани) тата «Учение о формах» (Калăпсем çинчен калани). Пĕрремĕш пайра Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхин сасă тытăмĕ пирки çырать. Ун шухăшĕпе чăваш чĕлхинче пĕтĕмпе 72 уçă тата хупă сасă (Ашмарин 1898: 2–5). Вулакансене çак хисеп ытлашши пек туйăнма пултарать. Анчах кунта нимĕнле те йăнăш çук, мĕншĕн тесен çак хисепе фонемăсене çеç мар, вĕсен варианчĕсене тата диалектсенче çеç усă куракан сасăсене те кĕртнĕ. Урăхла каласан, ăсчах чăваш сасă тытăмне пĕтĕмĕшле тишкернĕ.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче автор чăваш морфологийĕ пирки çырать. Кунта кашни пуплев пайĕнчи кашни калăпăн улшăнăвне (парадигмисене) кăтартнă. Николай Иванович çак калăпсем çинчен тĕплĕн çырса парать. Вĕсен хушшинче чи интересли, паллах, япала ячĕн тата глаголăн калăпĕсем. Н.И. Ашмарин пек тарăн та тулли çак калăпсене никам та тĕпчемен. Тĕрессипе каласан, «Материалы» монографин кăларса ăсчах чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне хывнă. Николай Иванович хыççăн ĕçленĕ авторсем хăйсен чăваш чĕлхи грамматики пирки çырнă ĕçĕсенче, пĕтĕмĕшле илсен, унăн схемипе усă курнă.

1903 çулта Хусанта Н.И. Ашмарин «Опыт исследования чувашского синтаксиса» кĕнекен пĕрремĕш пайне пичетлесе кăларнă. Иккĕмĕш пайĕ вара Чĕмпĕр хулинче çирĕм çултан тин тухнă. Çак монографи чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче синтаксис çинчен çырнă пĕрремĕш кĕнеке пулнă. Унăн тытăмне А.А. Бобровников ăсчахпа Алтай миссийĕн членĕсем хатĕрленĕ «Грамматика монголо-калмыцкого языка» тата «Грамматика алтайского языка» кĕнекесенчи пек тунă (Бобровников 1849; Ильминский, Казем-Бек 1869). Анчах содержанийĕ, паллах, чăваш чĕлхи материалĕпе усă курса çырнăскер. «Опыт» кĕнекене вуланă кашни çын тӳрех çакна асăрхать: унта халăх хушшинче упранса юлнă питĕ пуян чĕлхе материалĕ нумай. Автор фольклор, халăх поэзийĕнчен илнĕ чылай тĕслĕхпе усă курнă.

«Опыт» монографийĕн пĕрремĕш пайĕнче Николай Иванович япала ячĕсен калăпĕсене тĕпченĕ. Иккĕмĕш пайĕнче вара вăл глагол калăпĕсене тишкернĕ. Пирĕн шутпа, çапла пайлани питĕ тĕрĕс те вырăнлă пулса тухнă, мĕншĕн тесен япала ячĕсемпе глагол чăнах та чĕлхен хăй евĕрлĕ, уйрăлса тăракан пуплев пайĕсем пулса тăраççĕ, тĕрлĕ морфологи тата синтаксис уйрăмлăхĕсене кăтартаççĕ.

Чăваш падеж калăпĕсене ăсчах синтаксис тĕлĕшĕнчен тĕпченĕ. Чĕлхе пĕлĕвĕнче падежсене çакăн пек меслетпе тĕпчени анлăн сарăлман, мĕншĕн тесен «падеж» морфологи категорийĕ шутланать. Çавăнпа падеж калăпĕсене çак енчен хаклани пирĕншĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Н.И. Ашмарин

шухăшĕпе чăваш чĕлхинче 7 падеж. Вĕсен йышĕнче тĕп, камăнлăх, пару, тăву, вырăн, туху тата пĕрлĕлĕх (автор творительный терминпа усă курать) падежĕсем (Ашмарин 1903: 92–378). Хальхи учебниксемпе танлаштарсан çакна асăрхама пултаратпăр: икĕ падеж калăпĕ çитмест кунта – çуклăхпа пирке падежĕсем. Николай Иванович вăхăтĕнче çак калăпсене падеж системине пачах та кĕртмен, мĕншĕн тесен вĕсене 1950-60 çулсенче анчах уйрăм падежсем пек йышăнма пуçланă.

«Опыт» монографин иккĕмĕш пайĕнче автор, маларах каларăмăр ĕнтĕ, глагол калăпĕсем пирки çырать. Яланхи пекех вăл кашни калăпĕн пĕлтерĕшне чăваш халăх калаçăвĕнчен илнĕ йышлă тĕслĕхпе ăнлантарать. Ун шухăшĕпе чăваш чĕлхинче 12 вăхăт калăпĕ. Паллах, вĕсенчен хăш-пĕри çеç хальхи чăвашсен пуплевĕнче тĕл пулать, мĕншĕн тесен сайра усă курнă вăхăтсем халиччен пачах та çухалса пĕтнĕ. Çак 12 вăхăт калăпĕнчен аналитика мелĕпе пулса кайнисем те сахал мар. Тĕслĕхрен, кайнă пулнă, кайнă пулать, кайнă пулĕ т. ыт. те (Ашмарин 1923: 171–236). Уйрăм параграфра Н.И. Ашмарин ытти аналитикăллă калăпсене те тишкернĕ. Хальхи чăваш пĕлĕвĕнче вĕсене «хутлă глаголсем» теççĕ. Çак калăпсем -са/-се аффикслă деепричастипе пулăшу глаголĕсен çыхăнăвĕпе пулаççĕ. Вĕсем ĕçĕн тĕрлĕ уйрăмлăхĕсене (ĕçĕн пуçламăшĕ е вĕçĕ, вăрăмăшĕ е кĕске вăхăтлăхĕ т. ыт. те) кăтартаççĕ: вуласа тух, янрăса кай, пăхса ил. Ăсчах хăй ĕçĕнче 50 ытла пулăшу глаголĕнчен тăракан список панă (Ашмарин 1923: 40–107).

Николай Иванович ĕçленĕ тепĕр ăслăлăх пайĕ – чăваш чĕлхин историйĕ. Унăн ку енпе çырнă чи паллă ĕçĕ – «Болгары и чуваши». Вăл 1902 çулта кун курнă. Çак калăпăшĕ пысăках мар кĕнекере автор пăлхарсен кĕске историйĕ, вĕсемпе венгрсен мăн аслашшĕсен çыхăнăвĕсем, çармăс, удмурт тата чăваш сăмахĕсен пĕрпеклĕхĕсем, Атăлçи эпитафи çырăвĕсем пирки çырать. Çак кĕнекере Н.И. Ашмаринăн анлă чĕлхе тата истори пĕлӳлĕхĕ анлă пулни лайăх курăнать (Ашмарин 2012).

Чăваш чĕлхин историне тĕпчекен ăсчахсене «Болгары и чуваши» кĕнекен юлашки пайĕ кăсăклантарать. Çак пайра Николай Иванович ун вăхăтĕнче паллă пулнă Атăлçи пăлхар эпитафийĕсене тĕплĕн тишкерсе куçăрăвĕсенче тĕл пулакан хăш-пĕр йăнăшсене тӳрлетнĕ. Тĕслĕхрен, И.Н. Березин тĕпченĕ палăксенче араб саспаллийĕсемпе اول çырнă сăмаха ун шухăшĕпе оглы мар, ывăл е ул пек вуламалла (Ашмарин 2012: 73–74). Арабла سکر جال сăмах майлашăвне И.Н. Березин та, Ю. Клапрот та тĕрĕс куçарайман. Çак майлашăва чăваш чĕлхи виçипе пăхсан, шăпах та контекстпа килĕшӳллĕн куçару пулса тухать: сакăр çул (Ашмарин 2012: 76). Тепĕр эпитафире Ю. Клапрот никама та паллă мар Hier самăха тупса панă. Н.И. Ашмарин вара каллех чăваш чĕлхин материалĕпе усă курса ун выранне хĕр тесе вулама сĕннĕ (Ашмарин 2012: 78). Çакăн пек тĕслĕхсем кĕнекере нумай. Ăсчах Атăлçи пăлхар эпитафийĕсенче тĕл пулакан хăш-пĕр сăмахсемпе хальхи чăваш чĕлхинчи сăмахсенче пĕрпеклĕхсем пуррине çирĕп аргументсемпе ĕнентернĕ.

«Болгары и чуваши» монографире Николай Иванович В.В. Радлов гипотезипе килĕшменни пирки пĕрремĕш хут пĕлтернĕ (Ашмарин 2012: 128). Ун шухăшĕпе чăваш чĕлхи – чăн тĕрĕк чĕлхи. Финн-угр чĕлхисенчи хăш-пĕр элементсене чăвашсем çак региона куçнă хыççăн çеç йышăнма пуçланă. 31 çулти ăсчах çакăн пек шухăшсем пĕлтерни чăнах та хăюллă утăм, мĕншĕн тесен В.В. Радлов академикăн ăслăлăхри авторитечĕ вăл вăхăтра пысăк шайра пулнă.

Н.И. Ашмарин тĕпченĕ тепĕр ăслăлăх облаçĕ – евĕрлев сăмахĕсем (ăсчах вĕсене “мимемăсем” тесе каланă). Тĕрĕк чĕлхисенче анлă сарăлнă çакăн пек сăмахсене Николай Ивановиччен никам та тĕплĕн тĕпчемен. Çавăнпа ун хыççăн мимемăсене тишкерме пуçланă ăсчахсем (тĕслĕхрен, Н.К. Дмитриев (Дмитриев 1962: 59)) вăл шухăшласа кăларнă идейăсем тата терминсемпе усă курнă.

“Основы чувашской мимологии” ятлă пĕчĕк кĕнекене 1918 çулхи çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче ирттернĕ Пĕтĕм чăваш вĕренекенĕсен пĕрремĕш съездĕнче тунă доклад материалĕсем тăрăх пичетлесе кăларнă. Çак кĕнекере Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи евĕрлев сăмахĕсен вĕрĕнĕвĕн никĕсĕсене ăнлантарса панă. Ун шучĕпе, мимемăсен аталанăвĕн тĕп саккунĕсене уçса парсассăн, чĕлхери ытти сăмахсем ăçтан пулса кайнине те ăнланма пулать. Урăхла каласан, ăсчах – чĕлхе пулса кайнин сасă евĕрлĕх гипотези майлă. Вăл чăваш чĕлхинчи пĕтĕм евĕрлев сăмахĕсене пилĕк ушкăна уйăрса панă: сасă евĕрлĕхĕсем, хускану тата çутă евĕрлĕхĕсем, çăвартан тухакан сасăсен евĕрлĕхĕсем, çын ӳт-пĕвĕ ăшĕнчен тухакан сасăсен евĕрлĕхĕсем, ача-пăча сăмахĕсем (Ашмарин 1918).

Николай Ивановичăн çак темăпа çырнă тепĕр кĕнеки – “О морфологических категориях подражания в чувашском языке”, 1928 çулта Хусан хулинче тухнă. Кунта автор мимемăсемпе çыхăннă ытти шухăшĕсене ăнлантарса панă. Тĕслĕхрен, Европа чĕлхисемпе Атăл тăрăхĕнче сарăлнă чĕлхесене танлаштарсан çак кăсăклă пĕтĕмлетĕве тунă: индоевропа чĕлхисенче мимемăсем питĕ абстрактлă пĕлтерĕшлĕ, тĕрĕк чĕлхисенче вара кашни евĕрлев сăмахĕн хăйĕн конкретлă пĕлтерĕшĕ пур. Монографире вăл чăваш чĕлхинчи евĕрлев сăмахĕсен чи анлă усă куракан моделĕсене тишкернĕ, вĕçĕнче вара вĕренекенсем тĕрлĕ районсенче пуçтарнă мимемăсен списокĕсене панă (Ашмарин 1928).

Ăсчах хатĕрленĕ «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» те питĕ пысăк та пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăнă. Çак çăлкуçа В.И. Далĕн «Чĕрĕ вырăс чĕлхин ăнлантаруллă словарĕпе» те («Толковый Словарь живого великорусского языка») танлаштараççĕ, Н.И. Ашмарин çак кĕнекене тĕслĕхе илнĕ теççĕ.

Словарь валли материала Николай Иванович XIX ĕмĕр вĕçĕнчех пуçтарма пуçланă. «Чăвашла лайăх пĕлекенскер, вăл пасарсенче, пристаньсенче чăвашсемпе халаплама юратнă, вĕсенчен çĕнĕ сăмахсем çырса илнĕ, хăш сăмах ăçти чăвашсем хушшинче сарăлнине, ăна еплерех каланине тĕрĕсленĕ» (Скворцов 1985: 42). Унăн ывăлĕ [Виктор Николаевич Ашмарин] аса илнĕ тăрăх, паллă тĕпчевçĕ сĕтел хушшинче анчах ларса ĕçлеме пултарайман, вăл материал пухас тĕллевпе ятарласа çула тухнă е çул çинче, пăрахут е пуйăс кĕтсе тăнă чухне, çынсемпе тĕл пулса калаçма тăрăшнă. Хăйне пулăшса тăнă ĕçтешсене те йĕркелеме пĕлнĕ. Вĕсемпе тĕл пулса та калаçнă, пĕлĕшсемпе юлташсем урлă та çыхăну тытнă. Николай Иванович корреспондентсене (вĕсем пирки çапла калама юрать пулсан) ăслăлăх ĕçне юратма вĕрентнĕ (НА ЧГИГН: 22–24). Паллă ăсчах вăхăт-вăхăт тĕрлĕ уессене, унти чăваш ялĕсене кайса çӳренĕ. Хыснаран нимĕнле пулăшу илмесĕр, вăл Ёпхӳ кĕпĕрнинчи Пелепей уесĕнче, Шупашкар, Чикме, Кăрмăш уесĕсенче материал пухса пурăннă. Çапла майпа «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» картотекинче 1897 çултах 20 пине яхăн сăмах пухăннă (Скворцов 1985: 42).

Н.И. Ашмарин словарь хатĕрлес ĕçе хутла пĕлекен чăвашсене те явăçтарас тенĕ. Вăл «Чăваш словарĕ пухса хатĕрлемелли программа» (Программа для составления чувашского словаря) çырнă, ăна 1900 çулта Хусанта тухакан «Известия Общества археологии, истории и этнографии» журналта пичетлесе кăларнă. Пĕтĕмĕшле программăна 64 ыйту кĕнĕ. Ăсчаха тĕрлĕ йышши ятсемпе ятарлă сăмахсем кăсăклантарнă. Тĕслĕхрен, халăхсен ячĕсем, хула-ял ячĕсем, сăрт-ту ячĕсем, шыв-шур ячĕсем, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ячĕсем, ӳсен-тăран ячĕсем, апат-çимĕç ячĕсем, ятлаçу сăмахĕсем, кивелнĕ сăмахсем тата ыттисем. Халăх сăмахлăхĕпе (юмахсемпе, халапсемпе, юрăсемпе, такмаксемпе, ваттисен сăмахĕсемпе, паллăсемпе, тупмалли юмахсемпе, кĕлĕсемпе, вĕру-суру сăмахĕсемпе) çыхăннă ыйтусем те тĕл пулаççĕ. Тĕпчевçĕн авалхи йăла-

йĕркесем пирки те, чăвашсен туррисем пирки те, христиан тĕнĕ пирки те, чĕлхесем мĕнле пулса кайни çинчен те, чăваш ят ăçтан тухни çинчен те тĕплĕнрех пĕлес килнĕ. Вĕçĕнче Н.И. Ашмарин çапла каланă: «Даже за самые и краткие и мелкие сообщения я буду безгранично благодарен. В заключение припомню чувашскую пословицу, которая гласит: «Халăх сурать – кӳлĕ тăвать, пĕр çын сурать – типсе пырать» (Федотов 1995: 18, Известия Общества археологии, истории и этнографии 1900: 243–248).

Часах Ашмарин патне нумай-нумай ирĕклĕ корреспондентран çырусем, тепĕр чухне самаях пуян сăмахлăх пуххи, гербарисем, тĕрĕ коллекцийĕсем, ӳкерчĕксем т.ыт.те пырса тăма пуçланă (Скворцов 1985: 42).

Словарь валли материала пуçтарма Петр Вас. Васильев, К.С. Сергеев, Ив. Кир. Токмаков, Петр Ив. Орлов, Виктор Никифор. Орлов, Ив. Никол. Юркин, Вас. Никиф. Никифоров, Мих. Петр. Петров, Илья Ефим. Ефимов, Алекс. Вас. Рекеев, М.В. Шевле, Григ. Тим. Тимофеев, А.П. Милли (Федотов 1995: 34) пулăшнă. Н.И. Ашмарин ыйтнипе 1896 çултах И.Я. Яковлев, çавăн пекех Хусанти учительсен семинарийĕнче вĕрентекен Ф.Н. Никифоров нумай алçыру ярса панă (Скворцов 1985: 42). Материал пухма И.Я. Яковлев патĕнче вĕренекенсем те хутшăннă. Вĕсем хушшинче П.В. Васильев, И.А. Афанасьев, Г.И. Комиссаров, Г.Т. Тимофеев, И.Н. Юркин, В.Н. Орлов тата ыттисем (Краснов 1971: 226). Н.И. Ашмарина ярса панă материалсем, Словарĕн сыхланса юлнă карточкисем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕн институчĕн архивĕнче упранаççĕ.

Словарь пичете тухнă вăхăтра, 1930–1940-мĕш çулсенче, хăш-пĕр тĕпчевçĕсем тата влаçра тăракансем кĕнекен çитменлĕхсене палăртнă. «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» тĕн терминĕсене кĕртнĕшĕн, çав вăхăтрах общество-политика терминĕсене, ăслăлăхпа техника терминĕсене сахал усă курнăшăн, питĕ нумай пайăр ят (çынсен ячĕсене, ял, хула ячĕсене) çырса кăтартнăшăн критикленĕ. Паянхи кун вара çак сăмахсем кĕнекен паха енĕсем, словарĕн пуянлăхĕ пулса тăраççĕ. Хальхи вăхăтра тĕпчевçĕсем çитменлĕхсем çинчен хускатсан ытларах чухне словарь ăсталамалли йĕркесене пăсни (йăнăшсем, пĕр сăмаха икĕ хутчен кĕртни, сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарнă чухне сайра усă куракан сăмахсем тĕл пулнă) пирки калаççĕ.

2014 çулта «Индекс слов словаря чувашского языка Н.И. Ашмарина = Н.И. Ашмаринăн чăваш сăмахĕсен кĕнекин кăтарткăçĕ = Index Thesauri Linguae Tschuwaschorum N.I. Aschmarini» тухрĕ. Кăтарткăç сăмахсен шутне пĕлме май парать. Вĕсем хушшинче К сас паллипе пуçланакан сăмахсен шучĕ – 6981, Т сас паллипе – 5877, П сас паллипе – 5589, Х сас паллипе – 4211, Ç сас паллипе – 3715, С сас паллипе – 3605. Пĕтĕмĕшле 17 тома 54633 сăмах кĕнĕ (Иванова и Фомин 2014: 150). Уйрăм сăмахсем тата сăмах пайĕсем пирки 42,7 пин статья, пайăр ятсем пирки 9,1 пин статья çырнă. Пуплев пайĕсене илес пулсассăн, чи нумай статья япала ячĕсемпе (14,2 пин), глаголсемпе (7,4 пин), евĕрлевсемпе (2 пин) çыхăннă (Чувашская энциклопедия).

«Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» тĕслĕх питĕ нумай илсе кăтартнă, чылай сăмахăн транскрипцине те çырса палăртнă. Тĕслĕхрен,

ăрăскал (ырыскал), счастье. СПВВ. Ача-пăча ăрăскалне чăхсем çăмарта нумай туччăр (=телейне). На счастье детей пусть курицы несут побольше яиц. Сказки и пред. чув. Çаплах вара, Нарспиçĕм, çук-ши манăн ăрăскалăм? (неужели у меня нет счастья?). Собр. Ылтăн ука хутри йавăнтăр, пирĕн ăрăскалсем çавăрнтăр (пусть воротится наше счастье). Микушк. Пирĕн атте-аннен ачи нумай

пулин те, ăрăскал çук (нет счастья). Ib. Ăрăскал, счастье. N. Ăрăскал, ăрăскаллă çын (=телейлĕ). N. Санăн ăрăскал пысăк=аван пурнăçлă; санăн пурнăç аван; удача (Словарь чувашского языка, вып. IV: 61) (Хальхи чăваш литература чĕлхинче ăраскал сăмахпа усă кураççĕ).

Çăмăл пулман кĕнекен шăпи. Словарĕн вун çичĕ кăларăмĕ те кун çути куриччен хĕрĕх çул иртнĕ (1910–1950). «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» тепĕр хут пичетлесе кăларма 1994–2000 çулсенче çеç май килнĕ. 1968 çулта АПШра словарĕн (Bloomington, Indiana University) фотокопине тунă. Çавăн хыççăн вара ют çĕршыв тĕпчевçисем те «Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» паллашма пултарнă.

Унчен маларах 1935 çулта туркка тĕпчевçи Абдулкадир Инан ку словарĕн пĕрремĕш-пиллĕкмĕш томĕсемпе паллашса «Çuvaş dili lügati» ятлă рецензи хатĕрленĕ, ăна «Türkiyat mecmuası» журналта пичетленĕ. Автор çак сăмах кĕнеки чĕлхеçĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Словарĕн лайăх енĕсем пирки те çырнă. Уйрăммăнах тĕслĕхсем нумай пулни, кивелнĕ сăмахсене кĕлĕсенчен тата сăмах çаврăнăшĕсенчен çырса илнине, пĕрремĕшпе иккĕмĕш томсенче сăмахсене вырăсла, латинла куçарни çинчен каланă. Анчах та виççĕмĕш–пиллĕкмĕш томсенче сăмахсене чăвашла çеç ăнталантарни чĕлхене пĕлмен çынсене йывăрлăх кӳрет тенĕ. Статья вĕçĕнче чăваш чĕлхи туркка чĕлхине те тишкерме пулăшĕ тесе шанăç тытнă (İnan 1935: 300–301; Дегтярёв 2013: 66).

Нимĕç тĕпчевçи К.Г. Менгес рецензире тезаурус сайра тĕл пулакан словарь тесе палăртнă. Çав вăхăтрах, ун шучĕпе, «Чăваш сăмахсен кĕнеки» тĕрĕк чĕлхине халалланă чи пуян, чи пысăк калăпăшлă словарь пулса тухнă, чăваш чĕлхипе ытти тĕрĕк тата алтай чĕлхисен çыхăнăвĕн кăткăс ыйтăвĕсене тĕпчесе татса пама пулăшать. Чĕлхеçĕ çывăх вăхăтра та, каярахпа та Н.И. Ашмарин словарьне çитекен ĕç кун курайместь пулĕ тесе каланă (Menges 1974: 580–581).

Америка тĕпчевçи М. Дж. Дрезден чăваш чĕлхи ытти тĕрĕк чĕлхисем хушшинче уйрăм вырăн йышăнать тесе кăтартнă. Уралпа Алтай серийĕн редакторĕсене Н.И. Ашмаринăн кĕнекине тепĕр хут пичетлесе кăларма шут тытнăшăн мухтаса илнĕ. Çак кĕнеке чĕлхепе анчах çыхăнман тет, вăл чăваш халăхĕпе, унăн культурипе паллашма пулăшать, тесе каланă (Dresden 1969: 829–830).

Пирĕн çĕршыври тĕпчевçĕсем те словаре пысăк хак панă. Акă мĕн каланă ун пирки СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ С.Е. Малов: «Н.И. Ашмарин чăваш сăмахĕсене чĕрĕ калаçуран, кулленхи хутшăну пуплешĕвĕнчен, çавăн пекех халăх сăмахлăхĕнчен, вăл шутра нумай чухне юмăç-тухатмăш халапĕсемпе кĕллисенчен илнĕ; кунашкал сферăсенче чĕлхепе усă курасси халĕ яланлăхах пăрахăç пулнă, пирĕн автор вара вĕсене наука валли сыхласа хăварнă» (Малов 1941: 138; Скворцов 1985: 48).

Н.И. Ашмарин – чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн никĕслевçи, тĕнчипе паллă чĕлхеçĕ, тĕпчевçĕ. Унăн чăваш чĕлхин грамматикине, чĕлхен историйĕне тĕпчесе çырнă ĕçĕсем, халăх сăмахлăхĕн пуххи, «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» çивĕчлĕхне паянхи кун та çухатман. Н.И. Ашмаринăн пултарулăхне пирĕн çĕршывра кăна мар, унăн тулашĕнче те пысăк хак панă.

**Литература**

Ашмарин, Н.И. (1898). Материалы для исследования чувашского языка. Часть первая «Учение о звуках» (фонетика). Часть вторая «Учение о формах» (морфология). Казань: Типолитография Императорского университета. XXXI + 392 + XIX c.

Ашмарин, Н.И. (1903). Опыт исследования чувашского синтаксиса. Часть первая. Казань: Типолитография И.М. Ключникова. XII + 570 с.

Ашмарин, Н.И. (1918). Основы чувашской мимологии (о подражательных словах в чувашском языке). Казань: Издание чувашских национальных организаций. 10 с.

Ашмарин, Н.И. (1923). Опыт исследования чувашского синтаксиса. Часть вторая. Симбирск: Издание Союза потребительских обществ Чувашской автономной области. Типография С.Н.Х. 276 + IV с.

Ашмарин, Н.И. (1928). О морфологических категориях подражания в чувашском языке. Казань: Издание Академического центра ТНКП. 160 с.

Ашмарин, Н.И. (2012). Болгары и чуваши. Репринтное издание. Чебоксары: Чувашское книжное издательство. 143 с.

Бобровников, А.А. (1849). Грамматика монголо-калмыцкого языка. Казань: Типография университета. 403 с.

Дегтярёв, Г.А. (2013). «Турецкий дискурс в парадигме зарубежного чувашеведения». Чувашский гуманитарный вестник. № 8. с. 62–92.

Дмитриев, Н.К. (1962). «К изучению турецкой мимологии». Строй тюркских языков. Москва: Издательство восточной литературы, с. 59–84.

Иванова, А.М., Фомин Э.В. (2014). «Об индексе слов словаря чувашского языка Н.И. Ашмарина». Вестник Чувашского университета. № 4. с. 149–155.

Известия Общества археологии, истории этнографии (1900). Казань. Том XVI. с. 243–248.

Ильминский, Н.И., Казем-Бек А.К. и др. (1869). Грамматика алтайского языка. Казань: Типография университета. 289 с.

Краснов, Н.Г. (1971). «Н.И. Ашмарин и И.Я. Яковлев». Н.И. Ашмарин – основоположник чувашского языкознания. Чебоксары: НИИ при Совете Министров Чуваш. АССР. с. 225 – 230.

Малов, С.Е. «Памяти Н.И. Ашмарина». Записки ЧНИИ. Чебоксары, 1941. с. 136 – 139.

НА ЧГИГН. Отд. IV. Ед. хр. 150. Инв. № 272. Л. 22–24.

«Словарь чувашского языка». Чувашская энциклопедия. Режим доступа: http://enc.cap.ru/?t=publ&lnk=2874 ; дата обращения 13.03.2019.

Федотов, М.Р. (1995). Н.И. Ашмарин. Краткий очерк жизни и деятельности. Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманитарных наук. с. 52.

İnan, Abdülkadir (1935). “N. İ. Aşmarin, Çuvaş dili lügati”, (Slovar çuvaşskago yazıka: Thesawus Linguae Tsehuvasehorum) I–V, Kazan – Çubuksar, 1928–1930 . Türkiyat mecmuası. S. 300–301.

Dresden, M.J. (1969.) “Thesaurus Linguae Tschuvaschorum”, Volume I and II. Journal of the American Oriental Society. Vol. 89. No. 4. P. 829–830.

Menges, K.H. (1974). “Nikolaj Ivanovich Ashmarin, Thesaurus Linguae Tschuvaschorum”. Oriens. No. 23/24. P. 580–581.